с(чув)
Ю41
33566чув

ГЕННАДИЙ ЮМАРТ

# МЕРЕККЕ



ББК 84 Чув 7—5
Ю 42



Ю $\frac{4803710202-108}{М\ 136\ (03)-91}$ 73—91

ISBN 5-7670-0479-X

© Чӑваш кӗнеке издательстви, 1991 ç.

БИБЛИОТЕКА
им. М. Горького
33566 чув

кор
КОНТРОЛЬНЫЙ ЭКЗЕМПЛЯР
С (Чув)
Ю41

ГЕННАДИЙ ЮМАРТ

# МЕРЕККЕ

Сăвăсемпе туптарусем

*Владимир Арапов* ӳкерчĕкĕсем



Шупашкар
Чăваш кĕнеке издательстви
1991

## ШĂПА СĂВВИСЕМ

1

Пĕрремĕшĕ — Пĕркке,
Иккĕмĕшĕ — Икенпи,
Виççĕмĕшĕ — Виçенкей,
Тăваттăмĕшĕ — Тавăт,
Пиллĕкмĕшĕ — Пилтирек,
Улттăмĕшĕ — Ултиван,
Çиччĕмĕшĕ — Çичкеней,
Саккăрмĕшĕ — Сакарук,
Тăххăрмĕшĕ — Тăхтапи,
Вуннăмĕшĕ — Вуниле,
Сик тух!

2

Эпĕ — кашкăр,
Эс — куян,
Эсĕ — тилĕ,
Эс — упа,
Эсĕ — пурăш,
Эс — пăши,
Эсĕ — сунарçи.



3

Мак-мак Макмаккай,
Так-так Такмаккай,
Шак-шак Шакмаккай,
Чак-чак Чакмаккай,
Хак-хак Хакмаккай,
Куç хупмашкăн эсĕ кай!

4

Икĕ тантăш, икĕ хĕр —
Пӳлерпипе Сăварпи
Пĕр канашлă пулчĕç те
Тухрĕç Шурă Атăла.



Шур пăрахут килчĕ те —
Кайрĕç шур Шупашкара.
Юлассу килмест пулсан,
Хăвăртраххăн тух та чуп.

5

Йăлтăр-йăлтăр
Çутă çăлтăр
Йăл çутаттăр,
Йăлтăртаттăр.
Çăлтăрсем патне пĕр харăс
Карапппа ак пурте тарĕç.
Çывăрса юлаканни —
Хуралçи пулаканни.

## ТУХ, ВИННИ-ПУХ!

Винни-Пух!
Винни-Пух!
Вылямашкăн тух!
Упа-упа утаман,
Кампала выляс-ха ман?
Тусăмсем килмен кунта.
Эс çӳрен пуль вăрманта?
Винни-винни, Винни-Пух!
Хăвăртраххăн эсĕ тух!
Чу-у-у!
Иккĕн ярнăпăр
Чуччу!

## ТЫТ МАНА

Эй, чуп, хăвала,
Пирĕнпе пĕрле выля!
Чирлĕ-чĕрлĕ çын пекех
Эс çӳретĕн тек-текех.
Пул вăр-вар, ан пул лӳппер,
Спортсмен пек эс ут чипер.
Эй, чуп, хăвала,
Пирĕнпе пĕрле выля!
Эпĕ тарăп — тыт мана,
Тытăп эп вара сана.

## КАТĂРКАС

Катăр-катăр катăркас
Илĕртмешкĕн пит хавас.
Çырлине татма тăран —
Аллуна картах туртан:
Яшт! чикет те йĕппипе
Уткалатăн айккипе.
Ун тăпăрка çырлине
Тат, сирсе тураттине.

## УТЬĂККА

Утьăкка! Утьăкка!
Çитĕнсемччĕ маттуркка.
Хăлаçланса аллупа,
Талт! тапса яр урупа,
Вирхĕнсе вĕç вирелле,
Çăмăллăн сик çĕрелле.
Услап ўкĕ урайне,
Эсĕ тăр ура çине.
Улăп пек пулсам патвар,
Çĕкленсем татах вăр-вар.



## ХĔРЛĔ КАЙĂК

Кăсăя юман çинче
Сиккелерĕ пĕр кана.
Ешĕл çулçă хушшинче
Çăмăл мар тупма ăна.

— Симĕс кайăк, авă, кур:
Симĕс ун çуначĕсем,
Пĕсехи çинче ун пур
Сарă симĕс тĕкĕсем, —

Терĕ пĕчĕк Эрине. —
Эпĕ — хĕрлĕ кайăк, — тет,
Шăлкалать хăй тумтирне.
Кăсăя пек сиккелет.

Хĕрлĕ тутăр та пушмак,
Хĕрлĕ тĕслĕ ун кĕпе.
Кайăк пек çунат сулма
Хăлаçланать аллипе.

# ТУПТАРУСЕМ

Унсăр савăк мар Çĕн çул,
Ун тавра выля та кул.
Ешĕл чăрăш йăлтăрти,
Çитмĕл çиччĕ ун тетти.



Ту-ту-тут! Вăл кăшкăртать,
Темĕн те пĕр турттарать.



Му-ук! тесе макăрать,
Вăл пире сĕтне парать.



## МЕРЕККЕ

— Эх, куртăм та мерекке! —
Тесе калать Каринкке.
— Мĕн вăл, — терĕм, — мерекке?
Каласамччĕ, Каринкке.
— Мерекке вăл... мерекке, —
Тесе пуçлать Каринкке. —
Лашине кӳлсе, пĕрре
Тухрĕ, тет, Кукша хире,
Тиесе килет кĕлте,
Шăхăрса пырать çӳлте.
Лавĕ питĕ пысăкран,
Турттармашкăн йывăртан
Пулăшас тет лашине:
Илчĕ вăл пĕр кĕлтине,
Хăрах уран лав çинче
Йăтса пырать аллинче!..
Çакă пулать мерекке, —
Тесе калать Каринкке.
— Мерекке, эппин, вара —
Кулăш тавраш, мыскара!





## ХĂВĂРТРАХ ÇИЕР

Асаннӳ икерчĕ·
Пикенсех пĕçерчĕ.
Çу та сĕрнĕ ун питне,
Пыл та сĕрнĕ теприне.
Ав, пиччӳ çиет пĕччен,
Вăл çисе пĕтериччен
Хăвăртрах çиме пуçлар,
Ун пек пысăккă пулар.

## ТУПТАРУ

Пĕрре тухса пăхсассăн —
Çурла пулса курăнать,
Тепре тухса пăхсассăн —
Çăмха пулса курăнать,
Татах тухса пăхсассăн —
Таçта тарса пытанать.



## АН МАКĂР

Пĕчĕкçеççĕскерĕм,
Çывăрах чиперрĕн.
Пăрăна-пăрăна ан макăр —
Пăрăнса ларайăн акă.
Чыхăна-чыхăна ан макăр —
Чыхăнса ларайăн акă.
Туртăна-туртăна ан макăр —
Туртăнса ларайăн акă.
Сан аннӳ те умăнта,
Сан аçу та çумăнта.
Ĕçес тесен — тюттю пур,
Выляс тесен — теттӳ пур.
Пĕчĕкçеççĕскерĕм,
Çывăрах чиперрĕн.



## ТУПТАРУСЕМ

Эп тапатăп урапа,
Эс пултар тытма алпа.

Вăл пулать-мĕн тĕрлĕрен:
Шăл тасатать ирсерен,
Тепри пушмак çутатать,
Леш тумтире якатать.



Уяв çитсен — çурт çинче
Вĕлкĕшет çил уççинче.



Сиплĕ-имлĕ куракран
Тунă тет ăна.
Чирлесессĕн ăнсăртран,
Сыватать сана.



Кăнтăрта пурнать чĕрчун:
Йывăç çӳллĕш майĕ ун.



33566 чув
Чувашс...
Республикан...
БИБЛ...
им. М. Горь...



## САНПАЛА ВЫЛЯСЧĔ МАН

— Хам-хам! Эй, Раман —
Никамран та хăраман!
Ма пăхмастăн ман енне?
Е илтместĕн чĕннине? —
Тет пĕр анчăк Рамана,
Куç илми сăнать ăна:
Хӳрине те пăтратать,
Ик уран та вăл тăрать.
Лешĕ çырла нĕтĕрет,
Камите асилтерет —
Кăппи-каппи çинипе
Вараланнă пĕтĕмпе.

— Хам-хам! Эй, Раман!
Санпала вылясчĕ ман.
Çитĕ ĕнтĕ кĕттерсе,
Çитĕ çырла нĕтĕрсе!
Эй, Раман! Сисмен хутран
Çыртăп акă урунтан.

## МАРИНЕПЕ ЛĔПĔШСЕМ

Кайрĕ пĕчĕк Марине
Сар чечеклĕ сăрт çине.
Сар чечеклĕ сăрт çинче,
Сар лĕпĕшсем хушшинче,
Сиккелесе вăл çӳрет,
Савăнăçлăн ĕнĕрлет.
Килчĕ тухрĕ çăмламас —
Никамран та хăрамасть,
Хăвалать лĕпĕшсене,
Макăртать Маринене.
Çитрĕ ашшĕ васкаса,
Ячĕ вăл йытта хуса.
Таврăнаççĕ лĕпĕшсем,
Ярăнса вĕçеç вĕсем.
Марине тути кулать,
Сулхăн сăнĕ çуталать.



## АН ТИВ!

Чи-чĕв-чив!
Чи-чĕв-чив!
Ах, ан пыр тĕм патне!
Ан хăрат чĕпсене.
Ах, ан тив!
Ах, ан тив
Эсĕ ман йăвама —
Хĕрĕме, ывлăма!
Эсĕ — улăп-этем.
Мĕнлерех-ха кĕртем
Ӳкĕте эп сана?
Тархаслатăп кăна:
Эп, ан тив, пĕчĕкскер,
Çерçи пек тĕссĕрскер,
Ан тив, хĕрлĕ хӳре,
Пурăнасшăн чĕре.
Чи-чĕв-чив!
Ах, ан тив!

## ТУПТАРУСЕМ

Юр пĕрчинчен пысăк мар,
Хăрамасть вăл этемрен:
Сĕмсĕрккe те вăл хаяр,
Хыттăнах çыртать ӳтрен.



Çичĕ тĕслĕ пурçăн карă
Атăл урлă карăнать;
Йăмăх хĕрлĕ те сап-сарă,
Симĕс тĕслĕ курăнать.



Çатма çине сарăлать,
Кăвар çинче саралать,
Çу сĕрсессĕн — çуталать,
Тутлă çимĕç вăл пулать.



Хура çунат кайăк пур,
Тĕлĕнтермĕш хăват пур:
Пĕр сулать те çунатне —
Çухатать кун çутине.



Чĕлтĕр-чĕлтĕр шур чĕнтĕр
Турат çине тирĕннĕ.
Çил тухсассăн силлентĕр —
Çĕр çине вăл сирпĕнĕ.



Асатте хапха уçать,
Асанне çăмхи тухать.



Ылтăн алăк уçăлать, —
Çутçанталăк çуталать.





## ИКĔ ÇУРА

Чупрĕ тухрĕ, — пĕлĕр-и? —
Пĕчĕкçеççĕ тем çури.
Хăй ун-кун пăхса илет,
Шур çăмха пек сиккелет,
Çĕр çумне те йăпшăнать,
Сыххăн-сыххăн шăвăнать.
Ăнсăртран хура çăмха
Сикрĕ пычĕ çывăха.
Хай пуçларĕç выляма —
Пĕр-пĕрне хăвалама.
Шурри тарчĕ тĕм хыçне,
Мяв-мяв! терĕ вăл лешне.
Хамлатса çӳрет хури,
Лешĕ халь чĕнмест юри.

# ТУПТАРУСЕМ

Касрăм-çуртăм юмана —
Пулчĕ икĕ такана.
Тинкеререх пăхрăм та —
Пĕрер çуркам пур унта.



Пурçăн тутăр çыхнăскер,
Симĕс енчĕк тытнăскер.



Çитĕнет вăл кăнтăрта,
Ик пусĕнчен шĕвĕрлет.
Сарă чĕлли çăварта
Пыл пек тутлăн ирĕлет.





Хурçă кăна чĕрни пур,
Çĕре чавма ӳнер пур.

Чĕмсĕр пичче умăмра,
Пин алă ун, пĕр ура.



Ашшĕн пĕвĕ яштака,
Амăш кукăр-макăркка,
Хĕрĕ ӳснĕ лăпсăркка,
Ывăлĕсем хаяркка.



Асламасăн икĕ хĕр,
Иккĕшĕ те пит чипер:
Ылтăнтан тухйи пĕрин,
Кĕмĕлтен тухйи теприн.



## ВИТЛЕШӲ

— Э-э-эй, тӑрнакка!
— Эсӗ ху лутака!
— Э-э-эй, тилпӗрен!
— Эсӗ — вӗлтӗрен!
— Эсӗ, эсӗ...— мармелад!
— Эсӗ — шоколад!
— Ха-ха-ха!
— Ха-ха-ха!



Туптарусен тупсӑмӗсем: ёлка, грузовик, ӗне, уйӑх, футбол, щетка, ялав, эмел, жираф, ӳпре, асамат кӗперӗ, икерчӗ, каҫ, пас, хӗвел, ирхи шуҫӑм, йӗкел, мӑкӑнь, дыня, плуг, йывӑҫ, хӑмла, хӗвелпе уйӑх.

*Для детей дошкольного, младшего школьного возраста*

**Геннадий Юмарт**

(Геннадий Федорович Трофимов)

**МЕРЕККЕ**

**ПОТЕХА**

**Стихи и загадки**

На чувашском языке

Редактор *В. П. Тимаков*
Художник *В. Я. Арапов*
Художественный редактор *Г. А. Игнатьев*
Технический редактор *В. П. Окина*
Корректор *Н. П. Печникова*

ИБ 2538

Сдано в набор 22.11.90. Подписано к печати 03.10.91. Формат $60 \times 90^1/_{32}$. Бумага офсетная № 1. Гарнитура обыкновенная новая. Печать офсетная. Усл. печ. л. 1,0. Усл. кр.-отт. 4,0. Учетно-изд. л. 0,77. Тираж 20000 экз. Заказ № 3146. Изд. № 73. Цена 20 коп.

Чувашское книжное издательство, 428000, Чебоксары, пр. Ленина, 4. Типография № 1 Государственного комитета Чувашской ССР по делам издательств, полиграфии и книжной торговли, 428019, Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 15.

20 пус



ЧĂВАШ
КĔНЕКЕ
ИЗДАТЕЛЬСТВИ